Пĕлетĕн-и тăван тăраха?

# Яманак шкулĕн аталанăвĕ

Иван Анисимович Патмар районти "Ял пурнăçĕ" хаçатăн 1977 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче хăйсен шкулĕ пирки çапла çырнăччĕ. "Ялти Матвей Федоров (ăна Лаппи Матви тенĕ) Чул хулара тарçăра ĕçленĕ чухне алфавитпа паллашнă. Килне таврăнсан шкул уçма шутланă. Хăйĕн хура пӳртĕнче 1890 çулсенче вăл 11 ачана вĕрентме пуçланă. Анчах пĕлĕвĕ çитеймен.

Унта вĕренкеленĕ Никита Прокопьев ( ялта ăна Собор Мĕкĕти тенĕ) 1903 çулта хăйĕн çуртĕнче шкул уçма килĕшнĕ..."

Халĕ вара, Е. Кухарева — ЧР Патшалăх тĕп архивĕн специалисчĕ тĕплĕн çырса кăтартнă хыççăн, Яманакра çав çулхи раштав уйăхĕнче шкул уçнине çирĕплетсех калама пулать. Вăл "Яманак



Форверцсем: Кронид (фотоаппаратли) тата Болеслав ашшĕ-амăшĕпе

шкулĕ — 100 çулта" ятпа пичетленнĕ. (**"Я. п." — 138 № — В. К.**).

Яманакри ĕçтешсене пулăшас тĕллевпе эпĕ çак уяв умĕн хамăн архивра пур хăш-пĕр материалсемпе паллаштарас терĕм. Вĕсем вулакансене те кăсăклантараççĕ тесе шутлатăп.

Шел, лайăхпа пуçланнă вĕрентес ĕç пысăк инкекпе вĕçленнĕ. 1904 çулхи июнĕн (çĕртмен) 25-мĕшĕнче Яманакри хутла вĕренмелли шкул çурчĕ тĕпĕ-йĕрĕпех çунса кайнă. Кил хуçисем, Çĕрпӳ ярмаркkине васканă пирки, кăмакине ытларах хутнă пулас е тимлĕх çителĕксĕртерех уйăрнă — пушар тухнă. Ун çинчен Кĕçĕн Шетмĕ пачăшки Василий Тихомиров, прихутри шкулсене сăнаса тăраканскер, Хусан епархийĕн вĕренӳ совечĕн Етĕрнери уесри уйрăмне çапла çырса пĕлтернĕ: "Кил хуçисен тимсĕрлĕхне пула шкул çурчĕ, партăсемпе хăш-пĕр вĕренӳ кĕнекисем кăнтăрлахи вăхăтрах çунса кĕлленнĕ".

Яманакри чи ватă çынсенчен пĕри Андрей Яковлевич Яковлев — Уртем мучи — 1992 çулхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕнче çапла каласа панăччĕ. "Эпĕ ун чухне çамрăк ачаччĕ (вăл ун чухне 8-та пулнă — **В. К.**), пирĕн кантăк çине пушар çути ӳкрĕ. Эпĕ килтисене ун пирки каларăм. Вĕсем унта васкаса тухса кайрĕç. Шкулĕ Соборнăй Матвей çурчĕн пĕр пӳлĕмĕнче вырнаçнă пулнă. Вăл хăçан уçăлнине эпĕ пĕлместĕп. Халĕ çав вырăнта Саша — Матвей мăнукĕ пурăнать. Çурчĕ кĕтесрен 2-мĕш шутланать. Пĕрремĕшĕ — Патмар çурчĕ.

Сăмах май каласан, Яманакра шкул директорĕнче чылай вăхăт Йĕпремри Дмитрий Назарович ĕçлерĕ..." (Д. Н. Семенов пирки эпир каярахпа тĕплĕнрех асăнăпăр — **В. К.**).

Яманакра тепĕр 5 çултан çеç тепĕр хут шкул уçма май килнĕ. 1909 çулхи сентябрь (авăн) уйăхĕн 20-мĕшĕнче уçăлнă земство училищине В. С. Саввин тата Е. В. Васильева педагогсене ĕçлеме янă. Василий Саввин — Етĕрне уесĕнчи Синер ялĕнчен. Вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Çав çул Яманакра 42 арçын ача тата 6 хĕр ача пĕлӳ илме çӳренĕ.

1913 çулхи раштавăн (декабрĕн) 1-мĕшĕ тĕлне кĕçĕн уйрăмра 43 çамрăк ăс пухнă. Вĕсенчен 7-шĕ — хĕр ача. Аслă ушкăнра 18 ача вĕренни паллă. Ал ĕçне йĕркелесе, яман. Библиотекăра 41 тĕрлĕ 483 кĕнеке пур. Шкул çумĕнчи сада 14 улмуççи, 6 крыжовник, 2 чие йывăççи лартнă. Вĕренес кăмăллă ачасен йышĕ ӳссех пынă. Турă законĕсене Василий Федорович Тихомиров пачăшкă шкул уçнăранпах кунта хăнăхтарнă. 1914 çулхи отчет тăрăх эпир кунта Çĕрпӳ хулинчи Елизавета Тимофеевна Волкова (1900 çултанпа учительница, тĕрлĕ вырăнта ĕçленĕ, орден илме тивĕçнĕ, вилес умĕн Малти Тракра пурăннă. — **В. К.**) вĕрентнине пĕлетпĕр. Анна Александровна Руслановапа Римма Аристарховна Гермогенова ĕçленĕ. Мĕншĕн тесен шкулта пурĕ 61 ача — кĕçĕн тата аслă ушкăнсенче вĕреннĕ.

Ĕç условийĕсем начар пулнă, хăш-пĕр учительсене тивĕçтереймен. Çавăнпа вĕсем улшăнсах тăнă, пĕрер çул кăна ĕçленĕ. 1913 çулччен архиври документсенче В. Васильев, Борисова, Петров хушамачĕсем те тĕл пулаççĕ. Шкулта час-часах тĕрлĕ чир хуçаланнă. Акă, 1914 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн 15-мĕшĕччен шатраллă тиф хуçаланнă.

1920 çулта шкулта 104 ача вĕреннине шута илнĕ. 1922-24 çулсенче Яманакри шкул директорĕнче Д. Семенов ĕçленĕ. Вăл — Йĕпрем ялĕнчен. Мăн Шетмĕ чиркӳприхут училищинче хутла хăнăхнă. Арăмĕпе иккĕшĕ те кунта ĕçленĕ. Дмитрий Назарович тăрăшнипе Кушкă çамрăкĕсем, Захар Ильич Ильин ӳкĕтленипе Яманака çӳреме пуçланă. Çавăнпа унта тепĕр класс уçма тивнĕ. Шел, вĕсенчен чылайăшĕ каярахпа тĕнчен иккĕмĕш вăрçинче пуçне хунă.

Çапла аталанса пынă Яманак шкулĕ. Каярахпа, Трак районне йĕркелесен, 1935-1937 çулсенче кунти 7 çул вĕренмелли шкулта Кушкăри Илья Яковлевич Яковлев та ĕçленĕ. Ăна сăлтавсăрах айăпласа тытса хупнă. Унăн таса ятне таврăнă, анчах аякри тĕрмерен педагогăн тăван килне таврăнма май килмен.

Яманак тăрăхĕнчи тавра пĕлӳçĕсене пĕлсе тăма тата пулăшу ыйтса. Яманакра çуралса ӳснĕ 3 çын хăй вăхăтĕнче Хусанти вак халăхсен учительсен семинарийĕнчен (вырăсла "инородческая учительская семинария") вĕренсе тухнă. Вĕсем, ахăртнех, Кĕçĕн Шетмĕри чиркӳприхут училищинче е урăх çĕрте çырма-вулама хăнăхнă. Вĕсен шăпине те, май килсен пĕлесчĕ. Пĕр тăван Федоровсем. Иван Федорович 1868 çулта, кăрлачăн —январĕн 8-мĕшĕнче çуралнă. 1888 çулта семинаринчен вĕренсе тухнă. Шăллĕ 3 çул çамрăкрах, çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче çуралнă, 1890 çулта учитель пулса тухнă. Василий Федорович Беляев 1876 çулхи пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче кун çути курнă. 1895 çулта семинарие пĕтернĕ.

Ку шкулта пĕлӳ илсе каярахпа чаплă ят-сум çĕнсе илнĕ çын сахал мар çак тăрăхра. Çапах та эпĕ хам Мускавра тĕл пулса калаçнă Вениамин Васильевич Агатьев çинчен кăна кĕскен çыраcшăн. Вăл 1989-1991 çулсенче, министерствăна пĕтериччен, СССР вăрман промышленноçĕн вăрман хуçалăхĕн Главнăй (Тĕп) управленийĕн начальникĕн çумĕнче ĕçленĕ. Урăхларах каласан, министр çумĕ пулнă. Вăл



В. Агатьев студент тапхăрĕнче

— Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, "Хисеп Палли" орденсен кавалерĕ. Пирĕн ентеше РСФСР Вăрман промышленноçĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят панă. Ăна Тĕнчери информатизаци академийĕн членне илнĕ.

Эпĕ ку ялта çуралса ӳснĕ, педагогсен çемйине пуçарса тата ăна аталантарса пынă Форверцсене те асăнса хăварасшăн. Кил хуçи — Тимофей Никитич — район йĕркеленсен 1935-37 çулсенче Малти Тракри пуçламăш шкулта ĕçленĕ. Каярахпа Яманакра тăрăшнă, Çĕпĕре тухса кайсан колхоз председателĕ пулнă. Ывăлĕсем — Болеслав тата Кронид — ашшĕн профессине суйласа илнĕ, ун ĕçне малалла тăснă. Хамăр тăрăхри тĕрлĕ шкулсенче çамрăк ăрава пĕлӳ панă. Сăмах май каласан, Б. Форверц Трак шкулĕнче пионервожатăй та пулнă, Кушкăра та вĕрентнĕ. Кронид Тимофеевич ӳнер, фото, музыка, столяр тата ытти ал ĕçĕсен ăсти. Людмила Болеславовна та педагог. Вăл психолог, Вĕрентӳ институтĕнче ĕçлет. Çемье династийĕн стажĕ 150 çула яхăн кармашать ĕ нтĕ.

**В. КОНСТАНТИНОВ.**